84.09(=Чув)
В55
Ч-48010

ВИШНЕВСКАЯ
Клавдия Ивановна

# МИТТА

Поэма

Чебоксары
2005

Национальная библиотека ЧР
4-048010

УДК 821.512.111-82-1
ББК 84(2Рос=Чув)-5
В 55

**В 55 К.И. Вишневская. Митта.** Поэма. – Чебоксары. 2005.

Поэма о жизни поэта Митты.

И-48010
Национальная библиотека Чувашской Республики
Проверено 11 ОКТ 2017

© К.И. Вишневская, 2005

К84.09(2-4Чув)
В55

ВИШНЕВСКАЯ
Клавдия
Ивановна

50 çул

журналист-поэт,
литература-критикĕ





# МИТТА

поэма

Шупашкар - 2005

## *МИТТА*
### *поэма*

*Кун-çул кăлăх пулмасассăн*
*Вилсен те пурăнать этем.*

Патăръел тăрăхне «паттăр» тенĕ.
Тен, çавăнпа çуралаççĕ патттăр?
Йăмрасем, çамрăксем, сăрт-ту енĕ...
Мĕнех ӳснĕ унта уйрăм хатăр?

Килнĕ ăçтан? Илсе пынă хăш çул?
Паттăр пулмасăр пачах майĕ çук?

Пепекеме вартах «хăталаççĕ»:
Тивмест пурнăç шăпине суйламашкăн.
Васлейĕм те кăштах ыталашĕ –
Çуралнă Патăръелте унăн ашшĕ.

Çын ăраскалне çырса хурсан-ши
Сĕтĕрнет унпала хура шăпи?

Çăпата шăпипе çын çырлахнă:
Пулман-çке ун валли урăх алăк.
Пулнă ансăр самана пĕр тапхăр
Выçлăхĕ пулнăран питĕ ахăр.

Йывăрлăхсене чăтмашкăн тивет:
Лашан та пулмасть телейлĕ йĕвен.

Курма тивмен Васлейĕн те пурлăх.
Вуннăрах вăл тытать суха пуçĕ.
Каяймăн ниçта, çавăнтах пурăн:
Ача куççулĕнчен суха пулĕ.

Калча та ӳсет çанталăк пулсан,
Ача ӳсет пархатарне курса.

2

Ĕçле-ĕçле кун каçиччен!
Тыр-пул илме кăштах –
Ĕне çинĕ кĕнекин
Хуçи илет пĕртак.

Пĕр патакран тăрать ĕç-кун,
Ăçтан пулать çăкри?

Сётел хушшинче выçнă чун –
Хĕрет поэт кăкри.

– Епле капла пурăнмалла? –
Хаçатра çырмаллах.
Поэт ялан халăхпала:
– Вăранăр манпала!

Чăваш чăтма çуралнине
Пĕлеççĕ пуçлăхсем.
Тĕпчеççĕ кам мĕн çырнине –
Вулаççĕ сăвăсем.

Килĕшсен-килĕшмесен те
Курнине çырмаллах.
Канлĕ пурăнăç пĕлмен те;
Хăрушă – чăтнинчен.

Çĕр çывăрмасăрах çырать
Митта пичин Ваççи.
Мĕн çырни пултăр ырра:
Инçе, çинçе каççи.

Пач илтмест пуçлăхăн хăлхи:
Нумайăн чухăнсем.
Çын та мар уншăн тăлăххи:
Парас килмест краççын.

Нимĕн те çук халăх валли.
Ĕççи – ирпе каçчен.
Нимĕн те çук валеçмелли –
Выçать-çке паттăр ен.

Кам выçман-ши вăл вăхăтра?
Тертленнĕ мĕскĕнсем.
Ваçлей çыравçă ăстрăмрах:
– Тулли хăшĕн – хырăмсем.

3

Колхоз тума пуçлани –
Хурах чанне çаптарни.
Мĕн пуррине пайланине
Кĕртеççĕ уйрăм кĕсъене.

Кам пĕлет мĕн тунине
Коллективизицинне?

Мĕнне пĕлмесĕр кашниех
Сутать чунне ĕмĕтсĕрех.

Ĕмĕтленнин аллине
Пĕр кĕмест-çке кучченеç.

Ăнсăртран кĕмсĕртетнине –
Çисĕм çапла сас панине –
Пĕлеççĕ сăвăç Ваçлейне.

Суха тăвать халăхпа,
Ут та çулать вăл унпах –
Ĕçлет ялан ырăпа.

Анчах тӳсĕмлĕ халăха
Сăвăçă хӳтĕлесшĕн-ха:

– Ĕçленине памалла
«Патакпа» мар, укçалла!

Хаçатăн кусне уçтарать –
Хăйăнне мăйне пăртарать...

Суяпа тавлашмалли –
Çынлăха аптратмалли.

Тупăнать тем те пĕр татах,
Чун макăрать халăхшăнах.

4

Патăръелти паттăртан
Ыйтаççĕ казаматра:
– Хисеплен чуралăха?
Кайрăн хирĕç халăха?
Кураймастăн пуçлăха?

–Ак! Сана! – Шартлаттарать чĕн...
Чăтмашкăн ытла та хĕн:
Сталин шăпăрт – чипер хĕр.
Чунĕ ун ырă тума –
Пулмăн кумма никама.

Кĕл тăвать поэт Турра:
– Пултăрах этем ырра.

Ăраскал çапла килет:
Ыр чуна – хура тивлет.

Хура халăх хуп-хурах –
Нумайăшĕн – хыт хура.

Илтĕнмест шăп калаçни –
Пурте килте ятлаçни:

– Хура халăх ухмах мар –
Йывăра тивет чăтма!

Пайтах хуçнă çăпата,
Сахал çапнă-и чăпта?

Çапах та чăваш пĕтмен,
Пултарнă кунта çитме.

Чăваша кам хĕстерет?
Çиме çукки пĕтерет.

Чурăслăхĕ – пуянран;
Пусмăрлăхĕ – чунсăртан.

Тăшман парсан хирĕçӳ
Çухалать-мĕн сан ĕçӳ.

5

Пулнă Ваçлейĕн паттăрлăх –
Кĕрешнĕ пĕччен саккăршăн:
Чакнă сывлăх тĕрмере.
Юлнă çынлăх, пĕтменех.

Хăварасшăн-çке вăйсăррăн
Хăваланă-мĕн ăссăррăн.
Ваçлей чакман каялла,
Сăвăç çырнă малаллах.

Чунне ун çинĕ мăшкăллăх:
Чăтма çук йывăр ăшăсăр.
Пулăшнă вăл çынсене;
Çăкăр яман хăй ăшне.

Пуçлăхпала-мĕн – пуçсăрлăх:
Çырни те, иккен, усăсăр.

Çыракансăр – пушă касамат –
Ăраскалсăр асамат.

6

Вĕтĕ çумăр çурĕ-çурĕ.
Хĕвел, пĕлĕт кĕпер турĕç.
Атăлпа поэт калаçрĕ –
Юрату сăмсахĕ асрĕ:

Нонна тусĕпе çӳренĕ.
Пике вăхăтне пĕлейнĕ.
Васлейпе савăннă вăхăт –
Тăхăр уйăх –ача – тăхтăр.

Юрласах çӳрет поэтăм.
Савăнсах çырать вăл: «Это
Все для нашего народа».
Пуçлăха лекмерĕ ода.

Кĕр! кĕрлерĕ аслатийĕ.
Ах, ăçта-ши аслаттийĕ?
Çыравçа тытса та кайрĕç,
Макăрса юрлать ун кайăк:

– Асилӳ яланах таса.
Йăмра та илет пуç тайса.
Ыйту пуçăмра. Чухăнрах
Чунлисем мĕн-ма пит кăра?

Комсомол ретне тăратсан
Уявларăмăр-çке чунтан.
Унран туртса илчĕç ялав.
Мĕншĕнне, элекçĕ, кала!

Çын чунне сутса пурăнма
Ирĕк панă кам-ши ăна?
Пур çав таçта та ничейный –
Пуçĕ пушах – шывлă чейник.

Есениншăн айăплама
Ăна кирлĕ мар! Кирлĕ мар!
Ăспа пурнакан юхăмран
Шикленеççĕ-çке пуçлăхсем.

Митта хăрамасăр савать.
Хусанкай та çав ăнлавпах.

Сăвăç тени чăрсăрланать:
Сĕмсĕр символа ватать.

– «Кивелнĕ поэзи» кирлĕ мар!
Илер «вут чĕлхи» пурăнма.
Çамрăк, ан шелле вăй-хала,
Комсомол ретне халалла! –

Пуçлăхшăн пулни ăнланмасть.
Нимĕн те чеи шарламасть.
Сăвăç уйăх мар чунĕпе:
Чĕри ун çунать çиçĕм пек.

Хăюллăн вăраннă хĕлхем –
Поэт чунĕнчи пĕр чĕлхе.
Сăвви халăха тӳр килет,
Хăçан-ши вăл кĕрĕ киле?..

7

Хура пĕлĕтсем шунăçем,
Шалт çумăр килет шуçнăçем.
Йывăр арман чулĕсем –
Шух вĕслетекенĕсем.

Çумăр килсен те каять вăл,
Унăн пĕтмест уншăн вăй.
Çусан çумăрĕ чулпа
Кĕрешмелле упапа.

Çыравçи те чăтăмсăртан
Шеллет арăмне халь чунтан:
– Нонна, маншăн ан кулян,
Çилпи хĕрĕмпе выля.

Çак савнă арăмăн тертне
Тăратсан комсомол ретне
Виçме пулмĕ йышĕпе,
Йытă чăтмĕ чунĕпе.

– Нонна, сана та йывăрах... –
Хĕрхенет сăвăç мăшăра:
– Сан умăнта ман парăм,
Ыр ут та туртас çук, савнă арăм.

Пĕрех шутламасть парăнма,
Памасть чунне сутăнтарма:

Сутаççĕ чунсăррисем,
Илеççĕ пуççăррисем.

Йĕрет поэт ку хутĕнче,
Таса куççуль – куç аркинче.
Есенинла кĕввисем,
Чăвашла ун йĕркисем.

Мĕтри Исаев критика
Тĕлĕнтерет политикан.
Вăл Мĕтрине хирĕçлет.
«Коммунизм ялавне» çитерет.

– Малтанхи хайлавçăсене
Вĕрентмелле çыру ĕçне.
Камсомол пурнăçĕпе,
Паллаш çыру ĕçĕпе...

Митта пайласшăн хурлăхне
Пĕлтерет Хусанкай тусне:
– Чуна вăслатасшăнах
Тăма кăларĕç тăна.

Тем тесен хатĕр тем теме.
Çук тесен калăн – çук темме?..
Шурăран тăваç хура:
Хирĕçме мар – ай, хурах!

Пĕр «Сĕрĕм»пĕтерчĕ ăна –
«Вăл шовинистланать» чăнах?
Айăпсăр айăп – Митта –
Чунĕ йĕрейрĕ китла.

8

Вăхăта вăтантарса
Çĕн йĕркелӳ пуçласа
Ваçça çырать хăюллансах
Пур сĕрĕмрен хăтăлса.

Комсомол поэчĕ халь
Шырать çĕнĕ вăй, пур хал.
Çырать вăл поэма та
Пролетарипе пулма.

– Комсомолец, пул малта!
Нихҫан ан юл хыҫала.
Йывăрах ҫав тăвалла,
Ҫăкĕ ҫăмăл мар, пулас?

Тем пулсан та, пурпĕрех!
Пирĕн валли ҫул пĕрре –
Тĕттĕмлĕхре ан вырт, поэзи!
– «Сĕрĕм» ҫыракан эс-и?..

Ҫырнишĕн ма айăплас?
Ҫăхав ҫырнă-ҫке пăлан.
Шăрҫаласа тунă суя
Ҫитернĕ ирех суда.

Кĕвĕллĕ чунсемшĕнех
Тивет ҫунтарма чунне.
Митта прозаик ҫеҫ пулсан
Поэзи пулĕччĕ тусан.

Техникума ал сулать:
Сăвăҫ тарать яла.
Тĕтĕмлĕ ялти шкулта
Ачана пĕрле уттар.

9

«Сĕрĕм» поэмăнах
Сыпăкпа вакланăҫем
Кашни цитатăна
Уйăраççĕ хĕстерме.

Вунă ҫул ҫав хута
Кĕвĕҫ Ĕҫхĕл йăтса чупать.
Иван Кузнецов та
Поэт шăпине таптать:

«Савас та савалас!
Пуҫ миминчи сĕрĕмне
Нашатырьпа ҫăвас»! –
Тиркет, киревсĕрленет.

Хăшĕ пĕрийĕсем:
«Хусанкайпа Митта-тем...
Пулман хулигансем».
Золотов: «Эп пĕлтерем:
Митта – хулиган пĕрех!»

Янранӑ вара клуб:
Ал ҫупнӑ тем таранччен,
Ташланӑ критик ку
Сӑвӑҫа тыттаричччен.

10

Хуҫӑлман Митта
Вӗсен ташшипе.
– Тухайман ҫутта,
Уншӑн мана пер!–

Тенӗ хӑюллах.
– Мӗн пӗлнӗ эпир?
Эп троцкизмла?!
Эсер те эсир!

«Сӗрӗме» тиркен
Усал тума мар?
Ҫырнӑ-ха вирлех –
Чунна усрама?!

Аптратнӑ чунпа
Митта ӑнланать.
– Эпӗ айӑплах –
Ирсӗр самана...

Кам хӗрхенӗ халь?
Йытӑ ҫеҫ улать.
Поэт-«пуҫтаха»
Кӗҫҫе пит тӑллать.

Ехремӗн пӳртне
Судсӑр-мӗнсӗрех
Сӑвӑҫа– «тӳре»
Пытарчӗ тӳрех.

11

Самана, самана та мар;
Ҫӗршыв та саншӑн мар.
Кам илтӗр сана ытама?
Йытӑ ҫеҫ улать – ырра мар.

Красноярск хӗрри –
Хӗл Мучин тӗрри.
Сивӗ ҫил улать.

Ăшă мар çулла-т.
Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Çĕпĕрти çынсем –
Нуша курнисем:
Цементлă урай
Туртать шăнăра.

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Çĕпĕрте Митта –
Кам кĕтĕр хута?
Карандашпа хута
Манаймасть кунта-т.

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Вăйпитти, кĕрек;
Сив чир ўпкере.
Çырать çĕрĕпе.
Сывлать хĕнлĕхпе.

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Амăшĕ: – Васлей,
Чăтмалла мĕнле?
Йывăр çав тери, –.
Макăрать чĕри.

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Пулăшас тесе
Лаша пысаççĕ килте –
Лашан ăш çупе
Сыватас ӳпке.

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Амăшĕ: – Упран:
Йăлăн-йăлăн Турра,
Эс ман, пирĕшти,
Пулăшĕ пĕртик.

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Этем шăнать-çке:
Пĕтет ун ӳпке.
Çапать сăн кăвак –
Кĕллет тăнлава.

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Лагерь асапне
Тӳснĕ çынсене
Хĕрхенес килет –
Сăмах çук – иртет...

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Ваçлей çынлăхпах,
Ырă чунпалах
Пурăннă лагерьте
Вунă çул хĕнре.

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Хĕрĕх çиччĕмĕш çул –
Тăван яла – çул.
Анчах...

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Сыхлаççĕ ăна,
«Тăшмана»:
Мантăр Ноннăна,
Тăван хулана.

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Шупашкар, çемйе –
Юрату çинче.
Çилпи ăсĕпе
Ашшĕ çук та пек.

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Ерленен шăпа
Чарăнмасть тăпах.
Çырма пӳлнĕрен
Ĕçлет кун-çĕрех.

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Кассиль романне
Чăвшлатать чăннех.

Чăваш кунччен – ача–
Роман вуламан пачах.

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Пурте юратни –
Пулмасть килĕшни:
Пултарулларах –
Тытас кунтăкра.

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Йăтайми таран
Çăк çакнă мăйран.
Чикейнĕ пиçен
Митта çĕклесен.

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Тăван – тăванах –
Пурри аванах.
Ленин партине
Вăл панă чунне.
Çапах...

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Чăтах асапна:
Çитеймен ăна
Тăван Ен ăшши –
Хĕн-хурăн тĕшши.

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.

Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

!1954! Çул!!!
Савăнăç – кун-çуллл!!!
... Ака уйăхĕнчи хута
Çĕр-хута
Канцеляр пытарать:
Митта нушалантăрах.

Самана, самана та мар;
Çĕршыв та саншăн мар.
Кам илтĕр сана ытама?
Йытă çеç улать – ырра мар.

Пулни-иртни, кай!
Чун илли – çăмăлттай!
Çитер поэта
Тивĕç саманта.

12

Сивĕтсен тин, кĕркунне
Кĕтсе илет шанăçне
Культура-искусствăпа
Пирĕн сăвăç Митта та.

Театрал тата Митта
Ĕçлет пулса консультант.
Чыс-хисеп тупать ăна-т,
Анчах сахал пурăнать.

Самаях вăл ĕлкĕрет,
Çухатман менталитет
Филигранлă çырнăран,
Ăс-тăн хурçă пулнăран.

Наци техĕмне туйсах
Янратнă кăмăллансах
Ăстаçă хăйĕн ĕçне
Манмалла мар ĕмĕрне.

Пуç яман пулсассăнах
Пурăнатчĕ ытларах.
Иртнĕ пурпĕр тăшманран,
Ниçта улăхайманран.

Хăваласа ăстаçа
Курасшăнччĕ хăпарса...
Кĕске ăсран çав çултах
Çухалать-çке пит часах.

Хӳтерсе хăямата
Çухатаймăн поэта:
Çынлăх панă ыр ăса
Тĕтерееймĕн таптаса.

Пĕр «Сĕрĕм» поэмăна
Аркатма сăна-сăна
Поэта чун-хавалтан
Сирес тенĕ çĕршывран.

Классике те вĕслесен...
Пур çӳле элеклекен.
Ăмсану – вĕри тăшман,
Мĕншĕн ăслине кăшлан?

Санăн ĕмĕрӳ кĕске
Пулсан та икĕ вĕçле.
Миттан вăрăм ĕмĕрне
Кĕскетеймĕн, чĕмере!

Миттаçăсем пухăнса
Пурăнатпăр савăнса.
Савăнать хăй те Митта:
Асăну хăми – Шупашкарта,
Вил тăпри – тăван ялта.

Чир – «Сĕрĕм» поэмăна
Пуянмарри ăнланать.
Паян çук-им вулакан?
Чунсăрришĕн вăл – вулкан.

Асамат кĕперĕпех –
Миттаçăсем Ваçлейпех.
Чăвашсен çунатлă ут –
Митта (пăнчă). Ру –
Интернет-мĕн – çивĕч ут.

Пурăнаççĕ Çĕршывра
Митаçăсем таврарах
Кăмăллă уттипеле,
Чăвашла юррипеле.

40.0)

**КЛАВДИЯ ИВАНОВНА ВИШНЕВСКАЯ**

**МИТТА**

**Поэма**

На чувашском языке

Компьютерный набор *К.И. Вишневская*

Компьютерная верстка *А.Ж. Арамян*

Подписано в печать 01.09.2005. Бумага офсетная. Печать оперативная.
Гарнитура Arial Cyr Chuv. Печ. л. 0,75. Тираж 500 экз.

4-48010

г. Чебоксары, пр. М. Горького, 24.

Национальная библиотека
Чувашской Республики